

## Иван КАБАЛИН (1923-1982)

Иван Андреевич Комсомольски районĕнчи Александровка ялĕнче рабочисен çемйинче çуралнă. 1938 çулта Кабалинсем Канаш хулине пурăнма куçнă. Унта яш вакун юсакан заводра токарьте тăрăшнă. 1942 çулта вăл салтак ретне тăнă, Украина фронтĕнче çапăçнă, Харькова ирĕке кăларма хутшăннă. Чăваш каччине миномет ротин уйрăм командирĕ пулма шаннă. Иван Кабалин Днепр çывăхĕнчи çапăçусенче паттăрлăх кăтартнă. Тăшманăн 250 ытла салтакĕпе офицерне тĕп тунă, пулеметчиксен 5 точкине аркатнă. Çак ĕçшĕн гварди сержантне Совет Союзĕн Геройĕн ятне панă, Ленин орденĕпе тата «Ылтăн Çăлтăр» медальпе чысланă.

Иван Кабалин вăрçă хыççăн службăра 1955 çулччен тăнă. Кĕçĕн лейтенант звание тивĕçнĕ. Улатăрти чукун çул транспорчĕн техникумĕнчен вĕренсе тухнă хыççăн маттур офицер Канашри вакун юсакан заводра ĕçленĕ. Унăн ятне ЧАССР Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхăн Хисеп кĕнекине кĕртнĕ. Комсомольскисем хăйсен ентешне сума суса паркра палăк лартнă, шкулта асăну хăми çакнă. Канаш хулинчи пĕр урама тата лицее унăн ятне панă, вăл пурăннă çурт çине асăну хăми вырнаçтарнă.